28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 МАЙ 29 ЫТЛАРИКУН 102(1853) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ТĂВАН ÇĔРШЫВА ХӲТĔЛЕКЕНСЕМПЕ ВĔСЕН ÇЕМЬИСЕМШĔН ТĂРĂШАССИ — ПĔТĔМ ХАЛĂХ ĔÇĔ

Большевиксен партийĕн, совет правительствин, пĕтĕм совет халăхĕн нумай ĕçĕсем хушшинче Тăван çĕршыва хӳтĕлекенсемшĕн—Отечественнăй вăрçă инваличĕсемшĕн тăрăшасси тата Хĕрлĕ Çар воинĕсен çемьисемшĕн тăрăшасси чи паха ĕçсенчен пĕри пулса тăнă, пулса тăрать те. Совет çыннисем çак ĕçе хамăрăн тăван Хĕрлĕ Çаршăн тăрăшнин уйăрăлми пайĕ тесе шутлаççĕ.

Халăх хăйĕн ывăлĕсене—паттăр та мухтавлă Хĕрлĕ Çар воинĕсене чĕререн юратса пурăнать. Тăван çĕршывшăн, унăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ воинсене халăх ĕмĕр-ĕмĕр манмĕ. Халăхăн çак шухăшне В. М. Молотов юлташ Сан-Францискăра радио тăрăх тухса каланă сăмахра питĕ уçăмлăн палăртса хăварчĕ:

«Паян,—терĕ Молотов юлташ,—эпир хăйсен паттăрлăхĕпе, хăйсен хĕçпăшалĕпе пирĕн тăшмана, Пĕрлешнĕ нацисен вилĕмлĕ тăшманне çĕнтересси патне илсе пынă çынсем çинчен шухăшлатпăр. Вилнĕ боецсене тата Германи фашизмĕн çав тери нумай жертвисене эпир ĕмĕр-ĕмĕрех асра тытăпăр. Эпир вăрçă инваличĕсем умĕнче, тăлăха юлнă çемьесем умĕнче хамăр тума тивĕçлĕ аслă ĕçсене тӳрĕ кăмăлпа туса пырăпăр».

Вăрçă çулĕсенче пирĕн партипе совет органĕсем, профсоюз организацийĕсем, социальнăй пулăшу парас тĕлĕшпе ĕçлекен органсем питĕ пысăк та пархатарлă ĕç турĕç. Тĕслĕхрен çакна кăтартса пани те çителĕклĕ. Отечественнăй вăрçă инваличĕсенчен 80 процентне ытла ĕçе вырнаçтарнă, пĕр иртнĕ çул хушшинче çеç пĕтĕм Совет Союзĕпе инвалидсене пирĕн государство 3 миллиард та 759 миллион тенкĕ укçа парса пулăшнă, кунсăр пуçне вĕсене тĕрлĕ çăмăллăхсем параççĕ.

Чăваш республикинчи III-мĕш группăри вăрçă инваличĕсенчен 98 процентне ĕçе вырнаçтарнă. 1944 çулта пĕр Социальнăй Обеспечени Халăх Комиссариачĕ енĕпе кăна 14,6 миллион тенке яхăн укçа парса пулăшнă. Кунсăр пуçне, профсоюзпа хуçалăх организацийĕсем нумай пулăшу панă.

Анчах та, халĕ ĕнтĕ вăрçă пĕтнĕ, вăрçă инваличĕсене тата Хĕрлĕ Çар воинĕсен çемьисене пулăшас ĕçе ерипен чакарса пыма та юрать, тени питех те тĕрĕс мар пулнă пулĕччĕ. Пачах урăхла, ку ĕçе пур майсемпе те вăйлатса пымалла, пирĕн партипе совет органĕсен, профсоюз организацийĕсен ĕçĕнче çак ĕç ку таранччченхинчен пысăкрах вырăн йышăнса тăмалла. Сăмахран, инвалидсене ĕçе вырнаçтарас задачăна илер. Кунта инвалидсене пĕр-пĕр çĕрте ĕç тупса парса, вĕсене пурăнмалăх ĕçукçи ĕçлесе илме май парасси çеç кĕмест. Вăрçăра пурнăçне шеллемесĕр çапăçнă, сывлăхне çухатнă çынсенчен пĕри те халĕ хăйне хăй юрăхсăра тухнă чăлах вырăнне хурса ӳпкелешмелле ан пултăр. Вăл хăй усăллă пулнине, обществăн пур енчен те юрăхлă членĕ пулнине туйса тăтăр, ĕçлемешкĕн, творчествăллă ĕçсем тумашкăн ун умĕнче пур тĕрлĕ çулсем те уççине, государство ăна хăйĕн кăмăлне каякан ĕç пама пултарнине çирĕп пĕлсе, шанса тăтăр. Инвалидсене производство ĕçне вĕрентмелли йĕркене питĕ тĕплĕн шухăшласа тумалла, кашни заводра, кашни фабрикăра вăрçă инваличĕсене хăйсен квалификацийĕсене хăпартса пыма условисем туса памалла.

Пирĕн республика вăрçă инваличĕсене ĕçе вырнаçтарас тĕлĕшпе РСФСР-ти облаçсемпе крайсем, республикăсем хушшинче начар мар вырăн йышăнса тăрать. Вăрçă инваличĕсене пирĕн республикăра ытларах ялхуçалăх специальноçĕсене вĕрентеççĕ. 1945 çулхи I-мĕш кварталта вăрçă инваличĕсене госпитальсем çумĕнчи курссенчен тата районсенче организациленĕ семинарсенчен 764 çынна вĕрентсе кăларнă. Халĕ вĕсем колхозсенче хурт-хăмăр специалисчĕсем, полеводсем, бригадирсем, счетоводсем пулса ĕçлеççĕ.

Анчах та ĕç пур çĕрте те ун пек пымасть-ха. Вăрçă инваличĕсене ĕçе вырнаçтарас тĕлĕшпе Çĕмĕрле районĕнче нумайранпа нимĕн те тумаççĕ. Чăваш АССР Совнаркомĕ кăтартса панă хыççăн та çĕмĕрлесем ку ĕçри çитменлĕхсене тӳрлетме большевикла тытăнман.

Инвалидсене производствăра ӳсе пыма май паракан специальноçсене вĕрентмелле. Ĕç вăл укçа-тенкĕ енчен çеç усăллă пулмалла мар, ĕçлекенĕн кăмăлне те каймалла. Вăрçă инваличĕсене ĕçе вырнаçтарнă чухне кашни предприятирех ĕнтĕ çавсене шута илсе татса памалла.

Инвалидсене медицина тĕлĕшпе пулăшу парасси те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Инвалидсенчен нумайĕшĕн госпитальрен тухнă хыççăн та тепĕр чухне нумай вăхăт хушши сипленме, медицинăн тĕрлĕ процедурисенче пулма тивет. Халăх сывлăхне упрас тĕлĕшпе ĕçлекен органсен çак ыйтăва тивĕçлипе татса памалла. Совет медицинин мĕнпур вăйне, çĕршыври халăх сывлăхне упрас тĕлĕшпе ĕçлекен мĕнпур учрежденисен ĕçне вăрçăра хăйсен сывлăхне çухатнă çынсен сывлăхне тӳрлетес ĕçе ямалла. Кунта тата çакна шута илмелле: инвалидăн суранĕ тӳрленсе çитмен пирки унăн тăтăшах больницăна кайса тăмалла пулсан, ăна ĕç те çав больница çывăхнерех тупса памалла.

Государство вăрçă инваличĕсене пенсисемпе пособисем памашкăн питĕ нумай укçа-тенкĕ уйăрса парать. Анчах вĕсене вырăнти советсем те питĕ пысăк пулăшу пама пултараççĕ тата вĕсем çав пулăшăва памалла та. Инвалидсене государство паракан пур çăмăллăхсемпе те усă курмалла тăвас пулать, инвалидсем валли ытларах магазинсемпе столовăйсем уçмалла, вĕсене хваттерсене юсама, вутă кӳрсе килме, пахча-çимĕç лартма пулăшас пулать. Ку тĕлĕшпе Сĕнтĕр районĕнчи колхозниксем паха пример кăтартрĕç. Вĕсем хăйсем хушшинче тир, çăм пухса вăрçă инваличĕсене Социальнăй Обеспечени Халăх Комиссариачĕ урлă кĕрĕксем, çăматăсем тутарса пачĕç. Сĕнтĕрвăррипе Октябрьски районсенчи нумай колхозсенче вăрçă инваличĕсене пулăшу памашкăн уйрăм фондсем уйăрнă.

Кашни инвалида уйрăмăн мĕн кирлине пĕлсе тăмалла. Инвалидсем çине пурин çине те пĕр пек пăхма юрамасть. Сăмахран, пĕрне çĕнĕ квалификаци илме пулăшмалла, теприне—опытлă хирург патне илсе кайса кăтартмалла, виççĕмĕшне хваттер тупса е юсаса памалла, тăваттăмĕшне—укçа-тенкĕпе е кĕпе-тумтирпе пулăшу памалла. Социальнăй пулăшу парас тĕлĕшпе ĕçлекен органсен, вырăнти совет органĕсенчи работниксен шăпах ĕнтĕ инвалидсене кашниннех çак енчен пĕлсе тăмалла.

Социальнăй пулăшу парас тĕлĕшпе ĕçлекен органсем государствăн çак паха ĕçне ăнăçлă туса пычăр тесен, вĕсене вырăнти партипе совет органĕсен тивĕçлипе ертсе пымалла. Анчах пирĕн пур çĕрте те ун пек пулса пымасть-ха. Акă, Кувакино районĕнчи райсобес ĕçĕсем çинчен ВКП(б) райкомĕн бюровĕнче те, ĕçсынни депутачĕсен райсоветĕнче те пĕрре те сӳтсе-явман, çапла вара райсобес партипе совет органĕсенчен пулăшу, кăтарту илмесĕр, хăй пĕлнĕ пек, ĕçлесе пырать. Кунта райсобес аппаратне питĕ пĕчĕк пӳлĕме вырнаçтарнă, унта пĕр-пĕр ыйтупа пынă инвалида ларса хăйĕн шухăш-кăмăлне каласа памашкăн вырăн та çук.

Вăрçă инваличĕсемшĕн, фронтра çапăçса вилнĕ çынсен çемьисемшĕн тăрăшасси—государствăн пысăк ĕçĕ, партипе совет учрежденисене ертсе пыракан кашни руководителĕн, кашни предприяти директорĕн, кашни колхоз председателĕн чи пысăк та таса тивĕçĕ пулса тăрать. Вăрçă инваличĕсемшĕн тăрăшни пысăк ĕçре те, пĕчĕккинче те палăрмалла, пĕр харăсах пиншер, вуншар пин çын çинчен те, пĕр уйрăм çынна мĕн кирли çинчен те шутламалла.

Çураки планне кашни колхоз, кашни культура тăрăх тултармалла

109 ГЕКТАР ИРХИ ÇĔРТМЕ ТУНĂ

ВĂРНАР. Хирпуçĕнчи «Победа» колхоз районра чи пысăк тухăçлă тырпул туса илекенсенчен пĕри шутланать. Колхоз кăçал та çуракине чи кĕске вăхăтра тата пысăк пахалăхпа иртгерчĕ. Тĕштырăсене акса пĕтернипе пĕрлех 43 гектар çĕрулми лартса хăварчĕ. Колхозниксем те хăйсен кил вырăнĕсене çĕрулми лартса пĕтернĕ. Çавăн пекех ферма çумĕнчи участока 2 гектар çĕрулми лартнă.

Халĕ колхоз хире тислĕк кăларса ирхи çĕртме сухи тума тытăнчĕ. Паянхи куна уя 2.000 лав тислĕк кăларнă, 109 гектар ирхи çĕртме тунă.

Еф. ВОЛКОВ.

ПĔР УЙĂХ ИРТНĔ ХЫÇÇĂН...

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ, майăн 28-мĕшĕ. (Телефонпа). Сталин ячĕпе тăракан колхоз çуракине тухнăранпа шăп пĕр уйăх çитрĕ. Çапла пулсан та, кунта çураки планне пурĕ те 30 процент кăна тултарнă.

Колхоз çураки ĕçĕнче мĕншĕн юлса пырать-ха, тесе ыйтсан, колхоз председателĕ Селиванов юлташ нимĕн те ответлеймест. Анчах та колхозниксем вара кашнийех: колхозниксем—ĕçре, Селиванов—ĕçкĕре, çавăнпа юлса пырать, тесе ответлеççĕ. Колхоз председателĕ çуракине тухнăранпа та хире тухса курман. Бригадирсем те хирте сайра пулаççĕ. Колхозниксем хире хĕвел тухса хăпарсан тин каяççĕ, хĕвел аниччен кĕреççĕ. Хирте те тимлĕн ĕçлени çук. Ахальтен мар ĕнтĕ, кунта сухаçăсем икĕ касăллă плугпа кунне 0,60—0,70 гектар кăна сухалаççĕ. Колхозăн руководителĕсем хăйсен килĕнчи çурхи ĕçсене тахçанах туса пĕтернĕ. Сăмахран, колхоз счетовочĕ Кудрявцев колхоз лашисемпе хăйĕн килкартинчи çĕрулмине лартса пĕтернĕ, пахча вырăнĕсене те сухаланă. Колхозра çураки ĕçĕсем вăраха тăсăлнине пăхмасăрах, туртăм вăйĕпе туллин усă курмаççĕ. Колхозăн 3 лаши, вăкăрĕсем çураки ĕçне пачах хутшăнман.

Колхозра МТС-ăн трактор бригади те ĕçлет. Анчах та, колхоз руководителĕсем пулăшман пирки, тракторсем калама çук начар ĕçлеççĕ. Шыв тата чуркăсем çитменнине пула вĕсем час-часах ĕçсĕр лараççĕ. «У—2» тата газогенераторлă трактора, майăн 12-мĕшĕнчен вара, пурĕ те 50 гектара яхăн кăна сухаланă.

Сталин ячĕпе тăракан колхозра парти кандидачĕсен группи, комсомол организацийĕ пур. Анчах та колхозниксем хушшинче парти кандидачĕсен группин руководителĕ Паденов юлташ хăй кăна пулкалать. Массăллă-политикăллă ĕçе туса пымаççĕ. Çуракине тухнăранпа пĕр номер стена хаçачĕ тата бригадăсенче пĕрер боевой листок кăна кăларнă. Избач Огадеева, шкул заведующийĕ Савлукова çак вăхăта çитсе те хире тухса курман.

Сталин ячĕпе тăракан колхоз руководителĕсем, ялти партипе комсомол организацийĕсен членĕсем çуракинчи ответлăха туйса ĕçлени курăнмасть-ха кунта.

П. ТИХОНОВ. (Хамăр корр.).

Комсомолец бригадинче

ЕТĔРНЕ. Кăтарши «Пионер» колхозри тăваттăмĕш бригада пур ĕçре те юлса пынă. Çуракине тухиччен пĕр уйăх маларах ку бригадăра бригадир пулса ĕçлеме Отечественнăй вăрçă инвалидне Степан Пугачев комсомолеца суйларĕç. Пугачев юлташ кĕске вăхăт хушшинчех çав юлса пыракан бригадăна мала кăларчĕ. Акана тухиччен юлнă уйăх çукрах вăхăтпа усă курса, Пугачев пĕтĕм туса çитермен ĕçсене туса çитерчĕ, колхозри ытти бригадăсемпе танлаштрĕ, лашасене пăхассине аванлатрĕ, дисциплинăна кирлĕ вырăна лартрĕ, массăллă-ăнлантарулă ĕçе йĕркелерĕ.

Халĕ вăрçă эпир çĕнтернипе вĕçленни бригадăри колхозниксен хастарлăхне темиçе хут ӳстерчĕ, вĕсем татах хастарлăрах ĕçлеме пуçларĕç. Бригадăн акмалли çĕрĕ колхозри ытти бригадăсенчен нумай ытларах пулнă пулин те, ака ĕçĕсене вăл çав бригадăсенчен маларах вĕçлерĕ. Çапла тума бригадăри колхозниксем хушшинчи ĕçе тĕрĕс организацилени, туртăм вăйĕпе тĕрĕс усă курни пулăшрĕ. Бригадăри Т. Александрова, В. Никитина, П. Пугачева, Ф. Захарова сухаçăсем, сӳресĕ А. Алексеева, акакансем М. Максимов, С. Ефимов колхозниксем нормăна яланах ӳстерсе тултарса пычĕç.

Халĕ Пугачев ертсе пыракан бригада çĕрулми лартать тата çĕртме пуссине тислĕк кăларать.

Н. ЦВЕТКОВ.



Ĕçсынни депутачĕсен райсоветĕсен исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, çуракинче тухăçлăн тата лайăх ĕçленĕшĕн малта пыракан çак колхозсене республикăри ХИСЕП ХĂМИ çине кĕртнĕ:

СĔНТĔРВĂРРИ РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

38. **Киров ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **А. И. Васильев** юлташ). Колхоз 180 гектар тĕштырăсене 11 ĕç кунĕнче лайăх пахалăхпа акса пĕтернĕ. Çĕрĕн пĕтĕм лаптăкне яровизациленĕ вăрлăхпа тата ретĕн-ретĕн акнă.

39. **Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **Архипов** юлташ). Колхоз тĕштырăсем акмалли плана 8 ĕç кунĕнче лайăх пахалăхпа пурнăçланă.

ВĂРМАР РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

40. **«Красная Кубня» колхоз** (председателĕ **Ф. Е. Сапаркин** юлташ, пуçламĕш парторганизаци секретарĕ **Ю. Бондарева** юлташ). Колхоз 450 гектар тĕштырра 9 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Тĕш тырăсен вăрлăхне яровизацилесе тата машинăпа ретĕн-ретĕн акнă.

41. **«Большевик» колхоз** (председателĕ **Алексеев** юлташ). Колхоз 968 гектар тĕштырра 10 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Тĕштырăсен 88 процентне машинăпа ретĕн-ретĕн акнă. Вăрлăхсене пĕтĕмпех чӳхесе тата яровизацилесе акнă.

42. **«Свобода» колхоз** (председателĕ **Иванов** юлташ). Колхоз 406 гектар тĕштырра 9 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Тĕштырăсене пĕтĕмпех яровизацилесе тата машинăпа ретĕн-ретĕн акнă.

43. **«Заря» колхоз** (председателĕ **В. Ивлева** юлташ). Колхоз тĕштырăсене агротехника енчен лайăх пахалăхпа 10 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ.

44. **«Красные Шептахи» колхоз** (председателĕ **Васильев** юлташ). Колхоз 275 гектар тĕштырра 10 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Тĕштырăсен лаптăкне пĕтĕмпех яровизациленĕ вăрлăх акнă.

45. **«Аниш» колхоз** (председателĕ **Григорьев** юлташ). Колхоз 388 гектар тĕштырра 9 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Çуракинче колхозăн 30 ĕнепе вăкăрĕ, колхозниксен 20 ĕнипе вăкăрĕ ĕçленĕ. Тырăсене агротехника енчен лайăх пахалăхпа акнă.

Шупашкар, Элĕк, Шăхасан тата Çĕрпӳ районĕсем çураки планне тултарнă

Вăрнар, Красноармейски, Муркаш районĕсем хыççăн, майăн 27-мĕшĕ тĕлне Шупашкар, Элĕк, Шăхасан тата Çĕрпӳ районĕсенчи колхозсем те çуракин государство планне тултарчĕç.

Шупашкар районĕ план тăрăх 11.658 гектар акас вырăнне 11.873 гектар, Элĕк районĕ 12.861 гектар вырăнне 12.878 гектар, Шăхасан районĕ 13.141 гектар вырăнне 13.149 гектар, Çĕрпӳ районĕ 12.893 гектар вырăнне 12.904 гектар акнă.

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ 1945 ÇУЛХИ МАЙĂН 25-МĔШĔ ТĔЛНЕ ÇУРАКИ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА (процентпа)

Районсем	Пĕтĕмпе акнă	Çав шутра: Тĕштырăпа пăрçа йышши тырăсем	Çĕрулми	Пахча-çимĕç	Кантăр	Йĕтĕн	Махорка
Вăрнар	101,3	108,9	92,1	43,3	95,0	88,5	—
Муркаш	101,3	102,0	90,2	51,2	70,0	—	—
Сĕнтĕр	100,6	104,4	95,8	44,0	74,0	—	—
Красноармейски	99,6	102,4	100,4	82,0	92,2	—	—
Шăхасан	99,2	102,1	83,5	63,0	68,5	—	—
Шупашкар	98,2	105,2	86,5	34,5	42,6	—	—
Çĕрпӳ	97,0	99,5	96,6	52,3	33,4	—	—
Ишлей	96,8	100,9	83,8	16,6	26,8	—	—
Элĕк	96,4	105,8	11,5	34,0	42,5	—	—
Калинино	95,8	115,5	80,0	37,8	91,1	—	—
Вăрмар	95,0	100,0	75,7	60,5	82,5	—	—
Куславкка	94,0	102,1	61,8	9,4	23,7	—	—
Елчĕк	93,9	95,5	77,6	48,7	86,8	—	—
Чурачăк	93,5	100,0	79,2	40,9	25,9	—	10,8
Сĕнтĕрвăрри	92,8	102,9	70,3	32,7	6,0	—	—
Советски	91,8	100,9	79,7	38,7	45,0	—	—
Етĕрне	91,8	99,0	88,1	20,0	32,8	59,2	—
Октябрьски	91,4	101,9	53,7	25,4	18,2	—	—
Чкаловски	90,7	96,6	38,6	43,9	29,7	—	—
Канаш	88,7	103,0	26,7	24,2	44,6	—	—
Тăвай	85,5	97,0	85,0	50,6	8,0	—	—
Комсомольски	82,3	89,9	25,0	37,3	14,1	—	—
Шăмăршă	79,9	87,7	4,0	5,7	—	—	—
Хĕрлĕ Чутай	77,9	91,7	19,2	30,0	4,3	—	—
Çĕмĕрле	73,5	88,0	18,3	9,5	46,0	28,3	—
Йĕпреç	73,1	86,8	11,5	28,0	24,6	16,5	8,5
Первомайски	68,6	70,0	6,4	2,8	—	8,0	—
Улатăр	65,8	80,9	1,1	3,0	—	21,6	41,4
Пăрачкав	64,7	66,7	24,7	—	—	22,8	15,1
Кувакино	62,4	70,4	2,0	3,7	—	11,4	11,6

Асăрхаттарни: Шăмăршă тата Первомайски районсенчи даннăйсем майăн 20-мĕшĕ тĕлне.

Малтисемпе танлашмалла

ШĂМĂРШĂ, майăн 28-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Районра чылай колхозсем çураки ĕçĕсене ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ. Паянхи кун тĕлне çураки планне 92,3 процент ытла тултарнă. Кунта çураки пĕтернĕ колхозсен шучĕ халĕ 20 ытла. МТС лайăхрах ĕçленĕ пулсан, районра çураки тата ăнăçларах иртнĕ пулĕччĕ. МТС-чи виçĕ трактор бригади çуркунне тракторпа тумалли ĕçсен планне иртгерсе тултарнă. 8-мĕш бригада (бригадирĕ Габайдуллин) плана 115 процент, 9-мĕш бригада (бригадирĕ Камкин) 104 процент, 5-мĕш бригада (бригадирĕ Соболев) 101 процент тултарнă. Анчах та МТС пĕтĕмпе плана пурĕ те çурри яхăн çеç тултарнă. Уйрăмăнах Куропаткин, Кроткин ертсе пыракан трактор бригадисем чăтма çук юлса пыраççĕ. Çак бригадăсенчи тракторсем пăсăлнă пирки нумай вăхăт ĕçлемеççĕ, трактористсем хăйсем те сӳрĕккĕн çеç ĕçлекелеççĕ. МТС директорĕ Степанов юлташ малта пыраканнисен ĕçри опытне юлса пыракан бригадăсене парас тĕлĕшпе нимĕн те тумасть. Кунта социализмла ăмăртăва та организацилемен.

Кашни бригада малтисемпе танлашассишĕн пĕтĕм вăя хурса, ăмăртса ĕçлемелле.

Н. ПАЛИАРОВ.



Ӳкерчĕк çинче: Совет Союзĕн икĕ хут Геройĕ **В. Д. Лавриненков.** Вăл нимĕçсен 35 самолетне хăй, 11 самолетне юлташĕсемпе пĕрле персе ӳкернĕ.

А. СТЕПАНОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Ача амăшĕ-героиня Наталия Андреевна Юткина

СССР Верховный Совет Президиумĕ 1945 çулхи майăн 22-мĕшĕнче кăларнă Указ тăрăх, пирĕн республикăри Улатăр районĕнчи «Красная Мордовия» колхозри Юткина Наталия Андреевна юлташа «Ача амăшĕ-героиня» ятне панă.

Наталия Андреевна 1903 çулта Улатăр районĕнчи Кученяево поселокĕнче çуралнă. Вăл халĕ колхозра тăрăшса ĕçлет. Унăн пурĕ 10 ача, вĕсенчен 7-шĕ ывăл, ыттисем—хĕрачасем. Аслă хĕрĕ — 22 çулхи Маруся колхозра ĕçлет. Иван—Хĕрлĕ Çар ретĕнче, Алексей — 6-мĕш класра вĕренет. Георгий, Татьяна тата Александр пуçламĕш шкулта вĕренеççĕ. Антонина, Николай, Виктор тата Михаил ятлă ачисем пĕчĕккĕ-ха, вĕсем детсада çӳреççĕ.

Наталия Андреевна Юткина юлташа «Ача амăшĕ-героиня» ятне парса, правительство ăна пысăк чыс турĕ. Çак хисеплĕ ята илнĕ ятпа саламласа, Юткина юлташа ырă сывлăхпа савăнăçлă кунçул сунатпăр.

СССР Наука академийĕ 200 çул тултарас умĕн

ЮБИЛЕЕ ИРТТЕРМЕ ТУНĂ ПĔТĔМ СОЮЗРИ КОМИТЕТĂН ПЛЕНУМĔ

СССР Наука академийĕ 220 çул тултарнине уявласа иртгерме тунă Пĕтĕм Союзри комитетăн майăн 22-мĕшĕнче пулнă ларăвĕнче В. Л. Комаров академик юбилее мĕнле хатĕрленни çинчен каласа панă. СССР Наука академийĕн юбилей ячĕпе иртгерекен сессийĕ июнĕн 15-мĕшĕпе 28-мĕшĕ хушшинче Мускавра тата Ленинградра пулса иртет. Юбилее уявлама 1.000 яхăн чи паллă совет ученăйĕсене чĕннĕ. Кунсăр пуçне, союзлă республикăсенчи наука академийĕсене, çар академийĕсене, университетсене, аслă шкулсене тата наукăпа тĕпчев институчĕсене юбилее иртгерме хăйсен представителĕсене яма сĕннĕ. Партипе совет организацийĕсен представителĕсене тата СССР Наука академийĕн филиалĕсемпе базисен представителĕсене те чĕннĕ. Юбилее уявланă çĕрте республикăсенчи тата уйрăм облаçсенчи наукăллă организацисен представителĕсем те пулаççĕ. Юбилей уявне ют çĕршывсенчи 146 чи паллă ученăй тата ют çĕршывсенчи 54 наука учрежденийĕсен представителĕсене чĕннĕ.

СССР Наука академийĕн издательстви юбилей тĕлне темиçе кĕнеке пичетлесе кăларать. «СССР Наука академийĕ 220 çул тултарни» ятлă справкăллă кĕнекере академи историйĕ çинчен çырнă статья, хисеплĕ академиксен, академиксен тата член-корреспондентсен списокĕ, академин наукăллă учрежденийĕсем çинчен çырнă пĕчĕк статьясем, цифрăсем пулаççĕ. Кунсăр пуçне, СССР Наука академийĕн 220 çулхи историйĕ çинчен çырнă кĕнеке пичетленсе тухать.

Академин юбилей ячĕпе иртгерекен сессийĕнче тумалли докладсене малтан вырăс, акăлчан тата француз чĕлхисемпе пичетлесе кăлараççĕ. Мускавпа Ленинградра юбилей тĕлне архиври материалсемпе кĕнекесен выставкине организацилеççĕ. Унта вырăс науки мĕнле аталанса пынине тата Наука академийĕн ăна тунăранпа хальхи вăхăтченхи ĕçĕсене кăтартса паракан чи интереслă документсем пулаççĕ.

Комитет пленумĕ СССР Наука академийĕн юбилейлĕ сессийĕн программине çирĕплетнĕ. Юбилейлĕ сессие июнĕн 16-мĕшĕнче Мускавра уçаççĕ. Сесси вăхăтĕнче Наука академийĕн 8 отделенийĕн ларăвĕсем пулса иртеççĕ. (ТАСС).

И. В. Сталин Г. Гопкинс господинпа В. А. Гарриман господина йышăнни

Майăн 26-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Президенчĕн Г. Трумэн господинăн хăйĕн представительне Г. Гопкинс господина тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Совет Союзĕнчи Посолне В. А. Гарриман господина йышăннă.

Йышăнура СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов пулнă.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

„Комсомольская Правда" хаçата 1-мĕш степень Отечественнăй вăрçă орденĕпе награддăласси çинчен

Совет çамрăкĕсене хамăр Тăван çĕршыва чунтан-чĕререн парăнса ĕçлеме вĕрентес тĕлĕшпе нумай тата ăнăçлăн ĕçленĕшĕн, совет çамрăкĕсене нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешме активлăн мобилизациленĕшĕн «Комсомольская Правда» хаçата 1-мĕш степень Отечественнăй вăрçă орденĕпе наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 çулхи майăн 26-мĕшĕ.

Шкулсенчи экзаменсем

ЛАЙĂХ ПАЛЛĂСЕМ ИЛЕÇÇĔ

СОВЕТСКОЕ, майăн 28-мĕшĕ. (Телефонпа). Шкулсенчи вĕренсе тухмалли экзаменсемпе аслăрах классене куçмалли пĕлÿ тĕрĕслевĕсем ăнăçлă иртеççĕ. Районра кăçал вăтам шкулсен X класĕнче пурĕ 44 ача вĕреннĕ. Вĕренÿре малтанах ĕлкĕрсе пырайман пирки 8 вĕренекене экзамена кĕртмен. Çапла вара X класран вĕренсе тухма тата çитĕнсе çитнине кăтартса паракан аттестат илме 36 вĕренекене экзамен пама кĕртнĕ. Вĕсенчен вырăс чĕлхипе сочиненисене начар паллăпа çырса 6 ача экзамен парайман. Халĕ ытти экзаменсене 30 ача йĕркеллĕ тата лайăх паллăсемпе параççĕ.

Майăн 25-мĕшĕнче вырăс чĕлхипе сăмах вĕççĕн ыйтса экзамен пулчĕ. Ку предметпа та нумай вĕренекенсем лайăх паллăсем илчĕç. «Виççĕ» паллăран кая илекен 2 ача кăна пулчĕ. Малинин тата Ильин комсомолецсем икĕ предметпа та «пиллĕк» паллăсем илчĕç.

Районра VII класран вĕренсе тухма пурĕ 233 ача экзамен тытаççĕ. Малтанхи кун математикăпа 33 вĕренекен экзамен парайман. Ытти вĕренекенсем лайăх паллăсем илчĕç. Вырăс чĕлхипе çыру ĕçĕсене пур вĕренекенсем те вăхăтра çырса пачĕç. Ку предметпа 34 вĕренекенĕн ĕçне начар паллăсемпе хакланă.

Экзаменсем пулман кунсенче вĕренекенсем вĕреннине аса илсе хăйсен пĕлĕвне тепĕр хут тĕрĕслеççĕ.

Районри вăтам шкулсенчи X класра вĕренекенсене экзамен пама Советскри вăтам шкула чĕнсе илнĕ. Вĕсене кунта лайăх хатĕрленсе кĕтсе илнĕ, экзамен пама кирлĕ условисем туса панă: пурне те лайăх хваттерсене вырнаçтарнă, ялпо столовăйĕнче вĕри апат çитереççĕ. Экзаменсене хатĕрленме вăтам шкулта ятарласа класс уйăрнă. Унта истори, географи, геометри предмечĕсемпе вĕреннине аса илсе çирĕплетме кирлĕ пособисене пурне те ачасен аллине панă. Библиотека яланах усă. Дежурнăй преподавательсем консультацисем параççĕ.

Экзаменсем йышăнакан комисси вĕренекенсен пĕлĕвĕсене васкамасăр, тĕплĕн тĕрĕслет. Юлашки кунсенче ачасем хăрани, хăйсен пĕлĕвĕсем пирки иккĕленни пите палăрмасть. Нумай ачасем пĕлÿ тĕрĕслевĕнче «пиллĕк» тата «тăваттă» паллăсем илеççĕ.

Калас пулать, кунта шкулсенче экзаменсем иртерес ĕçе пĕтĕмпех районри сутĕç пайĕ çине хунă. Комсомол райкомĕпе шкулсенчи комсомол организацийĕсем ку ĕçе çителĕксĕр хутшăннă. Комсомол райкомĕнче ĕçлекенсем шкулсенче, вĕренекенсем хушшинче пулмаççĕ, экзаменсемпе пĕлÿ тĕрĕслевĕсем мĕнле пынипе интересленмеççĕ. Районри сутĕç пайĕн заведующийĕ Семенов юлташ ун çинчен ВЛКСМ райкомĕн секретарьне Р. Семенова юлташа темиçе хутчен те астутарнă.

Экзаменсемпе пĕлÿ тĕрĕслевĕсене лайăх иртересси, паллах, сутĕç органĕсемпе шкул директорĕсенчен, учительсенчен нумай килет. Анчах комсомол организацийĕсен те ку ĕçрен аякра тăмалла мар. Комсомолецсен вĕреннĕ материалсене лайăх, таранăн пĕлнине кăтартса памалла, экзамена хатĕрленме пулăшмалла, кашни вĕренекене хăйĕн вăйне çирĕппĕн шанса тăма хăнăхтарас пулать.

АСЛĂ ВЫРĂС ХАЛĂХНЕ

Куллен эпир кĕтсе илетпĕр
Шурăмпуçне, çут хĕвеле.
Чи аслă телее чĕнетпĕр
Эпир хĕвел ячĕпеле.

Хĕвел пăхсассăн—кун та ырă,
Хавассăн çуталать тĕнче;
Тулса пиçет сĕтеклĕ тырă,
Ачашшăн саралать чечек.

Хĕвел пăхсассăн — ăшă кулă
Вылять ача сăнарĕнче;
Хĕвел пăхсассăн — пурнăç тулăх
Тăван совет çĕршывĕнче.

Тĕнче талккишĕнче мăнаçлăн
Хĕвел куллен çаврăннăçем,
Йĕри-тавра карталанаççĕ
Ун ачисем — планетăсем.

Хĕвел! Хĕвел! Пĕр çакă мар-и
Çунать халь пирĕн чĕрере!
Вырăс тăванăмăр сăнарĕ
Хĕвел пек курăнать пире.

Хăватлă халăх, аслă халăх,
Хĕвел пекех, эс ху тавра
Пуçтартăн ĕмĕр пурăнмалăх,
Çĕклерĕн ĕмĕр савăнмалăх
Пур халăха пĕр çĕршывра.

Ĕмĕр манми салют кĕрлерĕ,
Ку çитрĕ—аслă çуркунне.
Чи паттăр халăхшăн çĕклерĕ
Çулпуç ыр сывлăх куркине.

Аркадий ĔÇХĔЛ.

Карнавала хатĕрленер

Июнĕн 23-мĕшĕнче Шупашкарта Чăваш республикин 25 çул тултарнă ятпа пысăк карнавал пулать. Унта хулари художествăллă пултарулăх кружокĕсемпе уйрăм çынсем хăйсен пултарулăхĕсене кăтартаççĕ. Карнавала ирттерме халех хатĕрленмелле. Совет Союзĕнчи тĕрлĕ халăхсен тумĕсене, телейлĕ те савăнăçлă пурнăçа кăтартакан костюмсем çĕлетсе хумалла. Коллективсем, кружоксем, уйрăм çынсем мĕнле программăпа тухмаллине палăртса хумалла.

Карнавал совет халăхĕсен шухăш-кăмăлне, чăваш халăхĕн савăнăçне, ÿсĕмне, кăтартса памалла. Унта хаваслă ташă-юрăсем, вăйăсем, çынсем юбилей ячĕпе савăннине кăтартса памалла.

Артистсемпе композиторсен, художествăллă пултарулăх кружокĕсен руководителĕсемпе клуб работникĕсен çак карнавала хатĕрленес ĕçе ертсе пымалла. Художествăллă пултарулăх кружокĕсен уйрăм çынсен пултарулăхсемпе шухăш-кăмăлне шута илсе, халиччен пуян та пысăк программа тумалла. Художествăллă пултарулăх кружокĕсен руководителĕсен карнавалта лайăх ташлакансен, купăспа, балалайкăпа лайăх вылякансен ăмăртăвне пуçарса ертсе пымалла. Кунта кашни çын хăйĕн пултарулăхне кăтартма, савăнма пултартăр.

Художествăллă пултарулăх кружокĕсем çук çĕрте çак ĕçе активлă та хастар çамрăксем, комсомолецсем ертсе пыма тивĕçлĕ. Çав майпа ăста ташлама, юрлама, такмаксем калама, купăспа, балалайкăпа лайăх выляма пĕлекен çамрăксене пĕтĕçтермелле, массăллă вăйăсене вĕрентмелле. Çамрăксемпе комсомолецсен çак ĕçе пурпе те активлăн хутшăнтарма тăрăшмалла.

Эпир телейлĕ çĕршывра пурăнатпăр, савăнăçлă юрăсем юрлатпăр. Хамăран уява тулли те чаплăн уявлар. Республика 25 çул тултарнă ятпа пулакан карнавала лайăх хатĕрленсе савăнăçлă, хаваслă иртерер.

„Красная Кубня" колхоз членĕсен пуçарăвне ырлаççĕ

МУРКАШ, майăн 28-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсенче Вăрмар районĕнчи «Красная Кубня» колхоз членĕсен çырăвне сÿтсе-яваççĕ. Нумай колхозсенче «Красная Кубня» колхоз членĕсен пуçарăвне ырласа, конкретлă обязательствăсем йышăнаççĕ. «Красное Сормово» колхозра ферма çумĕнчи участока 11 гектар акма йышăннă. Çак участока утăлăх тата çуллахи вăхăтра ĕнесене çулса çитерме 4,7 гектар вика акнă, 2,8 гектар тымар-çимĕç, 3 гектар çĕрулми лартнă. Унсăр пуçне çур гектар ытти пахча-çимĕçсем, вăл шутрах лашасем валли кишĕр, акма шутлаççĕ. «Красное Сормово» колхоз республика 25 çул тултарнă тĕле выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур выльăхсем енĕпе те пурнăçлама йышăннă. Паянхи кун тĕлне кунта обязательство тăрăх сĕт памалли плана 67 процент тултарнă. Юбилей тĕлне пĕтĕмпех тултарма шутлаççĕ. Чуманкассинчи «Совет» колхоз çăмарта памалли плана 65 процент тултарнă, июнĕн 20-мĕшĕ тĕлне плана пĕтĕмпех тултарма йышăннă. «Родина» колхоз çăмарта памалли плана 100 процентчĕпех тултарнă.

Анчах районра государствăна сĕт-çу, çăмарта парас ĕç çителĕксĕр пырать-ха. Сĕт памалли плана районĕпе 15 процент, çăмарта памалли плана 21 процент кăна тултарнă. Мачăк, Янăш, Юçкасси ял Советĕсене кĕрекен колхозсенче II-мĕш кварталта сĕт-çу памалли плана 30 процентран иртерни пĕр колхоз та çук. Колхоз председателĕсем, ялпо работникĕсем тата сĕт-çу хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлекен организацисем ку ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасса кĕтсе лараççĕ. Уйрăм колхозсен председателĕсем хăйсем те колхозниксемшĕн пример пулса тăмаççĕ. Янăш ял Советĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Миронов 90 литр сĕт, 100 çăмарта, «Красный борец» колхоз председателĕ Масленников 80 литр сĕт, 100 çăмарта государствăна памалла. Паллах, çак руководительсем хатĕрлев ĕçне кирлĕ пек пулăшса пыраймаççĕ.

Районри Маслопром конторин управляющийĕ Назаров хăй те сĕт-çу хатĕрлес ĕçе чăрмантарса пырать. Панкли ялĕнче сĕт-çу илекен пункт организацилемелле. Çакăн пирки тахçанах каласса таталнă пулсан та, унта сĕт-çу илессине çак вăхăта çитсе те йĕркелемен.

Сĕт-çу, аш-какай тата çăмарта хатĕрлес ĕçе Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн районри уполномоченнăйĕпе райсовет исполкомĕ те оперативлă ертсе пымаççĕ-ха.

Ф. МАЛЫШКИН.

Польша горнякĕсен делегацийĕ Мускавран тухса кайни

Майăн 26-мĕшĕнче Польша горнякĕсен делегацийĕ Мускавран Польшăна тухса кайнă. Вĕсем Мускав ĕççыннисене парне пама пĕр эшелон çĕркăмрăкĕ илсе килнĕ. Делегацие Топольский господин ертсе пынă.

Аэродромра хăнасене СССР Çĕркăмрăк промышленность Халăх Комиссарĕн Заместителĕ Д. Г. Оника юлташ, ВЦСПС-ăн Пĕтĕм тĕнчепе çыхăнса тăракан Отделĕн Заведующийĕ М. И. Кузнецов юлташ, Çĕркăмрăк промышленность Наркомачĕн ответлă работникĕсем тата профсоюз организацийĕн представителĕсем ăсатса янă. Аэродромра Польша республикин Совет Союзĕнчи Посолĕ Модзелевский господин пулнă.

Мускавран каяс умĕн Польша горнякĕсем хăйсене Совет Союзĕн столицинче чĕререн те тăванла йышăнса пăхнăшăн Мускаври халăха хĕрÿллĕн тав тунă. (ТАСС).

Францири консультаци ассамблейин комиссийĕ Франкопа çыхăну тытас ĕçе пĕтерсе лартма ыйтать

ПАРИЖ, майăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Франс пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Францири консультаци ассамблейин ют çĕршыв ĕçĕсен комиссийĕ резолюци йышăннă. Резолюцире çапла каланă:

Испанире Франкон фашистла режимне Испани халăхне хирĕç пырса, ăна Гитлерпа Муссолини ирĕксĕрлесе туса хунă, Франко нейтралитет правилисене пăсса пынă, çак вăрçăн пĕтĕм тăршшĕпех вăл тĕнĕл держависене активлă пулăшса пынă, тата вăл паян Лавале Франци правительствине пама килĕшмест. Çаксене шута илсе, Комисси çапла шутлать: Германипе фашистла Италие çĕнтернĕ хыççăн союзниксем пурнăçа кĕртессишĕн çапăçнă демократи принципĕсем, çавăн пекех тата Франци хăрушсăрлăхра тăрасси те Франко режимне пĕтерме ыйтаççĕ, мĕншĕн тесен Испани халăхĕ хăй пурнăçĕн пĕртен-пĕр хуçи пулса тăмалла. Комисси Франци правительствинчен союзниксене çапла тума сĕнме ыйтать: Франкона халех влаçран тухма хушмалла. Франко вырăнне Испанире пур йышши демократисене те пĕрлештерсе тăракан правительство тумалла. Вара çав правительствăна ирĕклĕ суйлавсем туса иртерме хушмалла. Çавăн пек хушма май килмесен е хушсан та нимĕнле усă т пулмасан, Комисси Франци правительствинчен Франкопа дипломатиллĕ çыхăнăва тăма пăрахма ыйтать».

Крит утравĕ çинчи лару-тăру

НЬЮ-ЙОРК, майăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Крит утравĕ çинче пурăнакан халăх унти нимĕç офицерĕсене арестлеме хушать, вĕсене вăрçă преступникĕсем вырăнне хурса суд тума ыйтать. Крит утравĕ çинче пурăнакан 10.000 нимĕç салтакĕ ку таранччен хăйсен хĕçпăшалĕсемпе çÿреççĕ. Вĕсем тыткăна лекнĕ çынсем шутланса, ятарласа тунă районсенче пурăнаççĕ пулин те, вĕсене ку таранччен те хĕçпăшалсăрлантарман. Çав районсене йĕри-тавра пралукпа карса тухнă, анчах та унта нимĕçсем ирĕккĕнех куçса çÿреççĕ, хĕçпăшалпа çÿреççĕ, патрульте çÿрепĕ чухне çар автомобилĕсемпе усă кураççĕ. Крит утравĕ çинче пурăнакан грек çыннисем каланă тăрăх, нимĕçсем, хăйсене хĕçпăшалсăрлантарманнипе усă курса, Грецие пама тивĕçлĕ вăрçă хатĕрĕсене пĕтерсе пыраççĕ.

Крит çинче пурăнакан халăх Крит çинчи рядовой нимĕçсене кунтан урăх çĕре илсе кайма ыйтаççĕ, вăрçă преступникĕсем пулса тăракан нимĕç офицерĕсене çав вырăнтах тытса чарса, вĕсен ĕçĕсене курнă çынсем пурăнакан вырăнта суд тума ыйтаççĕ.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

«ВĔÇЕКЕН КРЕПОСТЬ» ЙЫШШИ ХĂВАТЛĂРАН ТА ХĂВАТЛА БОМБАРДИРОВЩИКСЕМ ТОКИО ХУЛИНЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, майăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешÿллĕ командованийĕн штабĕ çапла пĕлтернĕ: Минданао утравĕ çинче (Филиппин утравĕсем) Америка çарĕсем Даваоран çурçĕртерехри Ликанан аэродромне туртса илнĕ.

Çĕнĕ Гвинея çинче Австрали çарĕсем Уэйвейк районĕнче пĕтĕм çырана тăшмантан тасатса пĕтернĕ.

ВАШИНГТОН, майăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Лăпкă океан çинчи флочĕн штабĕ çапла пĕлтерет: майăн 24-мĕшĕпе 25-мĕшĕнче Японии бомбардировщикĕсем Окинава утравĕ районĕнче американецсен 11 çăмăл çар карапне сиенленĕ. Японецсен 111 самолетне персе ÿкернĕ.

ВАШИНГТОН, майăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Америка авиацийĕн 20-мĕш соединенийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: «Вĕçекен крепость» йышши хăватлăран та хăватлă бомбардировщиксен питех те пысăк соединенийĕсем, Мариан утравĕсем çинчен вĕçсе улăхса, Токио хулине тапаннă.

ЛОНДОН, майăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Гуам утравĕ çинчи корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: майăн 26-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле американецсен «Вĕçекен крепость» йышши хăватлăран та хăватлă 500 бомбардировщикĕ Токио хулине тапаннă, хула çине 4.000 тонна вут тивертекен бомбăсем пăрахнă. Çак тапăну вăл юлашки 48 сехет хушшинче Япони столицине иккĕмĕш хут тапанни пулса тăрать. Токио хулинчи промышленность центрне каллех вăйлă çĕмĕрнĕ.

ВАШИНГТОН, майăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Лăпкă океан çинчи флочĕн штабĕ çапла пĕлтерет: майăн 24-мĕшĕнчи каçхи сехетсенчен пуçласа майăн 25-мĕшĕнчи ирччен Америка самолечĕсем тата карапсем çинчипе çыранри зенитнăй батарейăсем Японин 166 самолетне персе ÿкернĕ. Майăн 24-мĕшĕнче Америка авиацийĕ Кюсю утравĕ çинчи аэродромсене тапаннă.

ДЖОЗЕФ ДЭВИС ЛОНДОНА ПЫНИ

ЛОНДОН майăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, майăн 25-мĕшĕнче Лондона Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Совет Союзĕнче посол пулса ĕçленĕ Джозеф Дэвис çитнĕ, ăна унта Трумэн президент ятарласа хушса янă.

ИРАК РЕГЕНЧĔ АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШÿЛЛĔ ШТАТСЕНЕ КАЙНĂ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, майăн 25-мĕшĕнче Ирак регенчĕ Абдул Илах, официальнăй хăна пулса, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсене çитнĕ. Абдул Илах çапла каланă: Эпĕ Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсене Трумэн президент чĕннипе килтĕм, тенĕ.

Иракăн Вашингтонри миссийĕ çапла каланă: Ирак регенчĕ Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсене мĕн пурĕ те çак тĕлĕшпе кăна килнĕ: вăл кунта шыв çинчи электричество сооруженийĕсемпе паллашасшăн, çавăн пекех тата Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи экономикăпа культура пурнăçне вĕренесшĕн.

ЧЕХОСЛОВАКИ ПРАВИТЕЛЬСТВИН ĔÇĔСЕМ

ПРАГА, майăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Чехословаки республикин правительстви Чехословакири нимĕçсен кашнин хăйĕн тата общество аллинчи мĕнпур пурлăхне, çавăн пекех тата сутăнчăксен пурлăхне те халăх аллине пама закон хатĕрленĕ. Çав закона республика президенчĕ, декрет пек çырса, çывăхри кунсенчех пичетлесе кăларать.

ТОЛЬЯТТИПЕ НЕННИЕ ÇУРÇĔР ИТАЛИРЕ ТЫТСА ХУПНĂ

РИМ, майăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Римри радио çапла пĕлтерет: Итали правительствин пур членĕсем те тата партисен представителĕсем те, нумай пулмасть Çурçĕр Италие кайнăскерсем, халĕ Рима таврăннă. Анчах та вĕсем хушшинче социалистсен партийĕн лидерĕ Ненни тата коммунистсен партийĕн лидерĕ Тольятти çук. Вĕсене Çурçĕр Италире тытса хупнă. Вĕсене акă мĕнле сăлтавпа тытса хупнă: Союзниксем чарнине пăхмасăрах, вĕсем халăх пухăвĕсенче сăмахсем тухса каланă тата çав пухусен председателĕсем пулнă, тенĕ.

ПЬЕТРО НЕННИЕ ИРĔКЕ КĂЛАРНИ

РИМ, майăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Римри радио союзниксен комиссийĕн пĕлтерĕвне панă. Пĕлтерÿре çапла каланă: Пьетро Ненние ятарласа ирĕк памасăр сăмах тухса калама юраманни çинчен асăрхаттарнă та ирĕке кăларнă, çавăн пек ирĕк памасăр Çурçĕр Италире пухусем тума тата пухусенче тухса калама чарнă. Ытти партисен руководителĕсене те çавăн пек асăрхаттарса каланă.

ТОЛЬЯТТИ ТАТА НЕННИ РИМА ТАВРĂНАÇÇĔ

РИМ, майăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). «Унта» хаçат çапла пĕлтерет: Пальмира Тольятти Рима паян каçхине таврăнмалла. Ненни Рима майăн 27-мĕшĕнче таврăнасса кĕтеççĕ.

ИТАЛИН ТАТА ТЕМИÇЕ ПРОВИНЦИНЕ ИТАЛИ АДМИНИСТРАЦИЙĔН АЛЛИНЕ ПАНĂ

ЛОНДОН, майăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Римран союзниксен комиссийĕн пĕлтерĕвне парать. Пĕлтерÿре çапла каланă: Флоренция тата Лукка провинцийĕсене июнь уйăхĕн пуçламăшĕнче Итали администрацийĕн аллине памалла тунă.

Майăн 28-мĕшĕнчен пуçласа, кăнтăрти районсемпе çурçĕрти районсем хушшинче экономикăллă чикĕ пĕтет.

ГИММЛЕР ВĂРЛАСА ПУХНĂ ХАКЛА ЯПАЛАСЕН СКЛАДНЕ ТУПНĂ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Нью-Йоркри радио çапла пĕлтерет: союзниксем Генрих Гиммлера ярса тытсанах Америка салтакĕсем Берхтесгаден хули районĕнче Гиммлер çаратса пухнă хаклă япаласен складне тупнă. Складра 26 çĕр-пывăн укçисем пулнă. Çав укçасем пĕрле, Америка долларĕпе шутласан, пĕр миллион доллар тăраççĕ.

АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШÿЛЛĔ ШТАТСЕН АВТОМОБИЛЬ ПРОМЫШЛЕННОÇĔНЧЕ ĔÇЛЕКЕНСЕМ ĔÇСĔР ТĂРСА ЮЛАССИ

ВАШИНГТОН, майăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Автомобиль промышленноçĕнчи рабочисен профсоюзĕн председателĕ Томас Трумэн президентпа калаçса илнĕ. Çавăн хыççăн вăл пичет представителĕсене çапла каланă: эпĕ Трумэн президента Детройт районĕнче январĕн 1-мĕшĕ тĕлне 400.000 рабочи ĕçсĕр тăрса юлма пултарни çинчен каласа кăтартрăм. Трумэн мана çавăн çинчен тĕплĕ информаци çырса пама ыйтрĕ, тенĕ.

КĔСКЕН

▲ Австрире Америка çарĕсем Гиммлерпа пĕрле ĕçленĕ паллă гестаповеца Оберга тытнă.

▲ Прагăри чех журналисчĕсен союзĕ нимĕçсемпе пĕрле ĕçленĕ 40 журналиста ытла союзран кăларнă та вĕсене ответ тыттармашкăн вĕсен ĕçĕсене чехсен наци советне панă. (ТАСС).

Выльăхсен йышне ÿстермелли чи паха тапхăр

Хальхи вăхăт выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçшĕн чи паха та ответлă тапхăр пулса тăрать. Халĕ лашасем хăмлаççĕ, ĕнесем пăрулаççĕ, сурăхсем тата ытти выльăхсем ĕрчеççĕ. Çамрăк выльăхсене тĕрĕс-тĕкĕл пăхса çитĕнтересси выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекенсен чи пысăк задачи пулса тăрать. Çакăнпа пĕрлех, хальхи вăхăт—выльăхсене чуптарса хăвармалли вăхăт та пулса тăрать.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «Колхозсемпе совхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатмалли 1945 çулхи план çинчен» йышăннă постановленире Чăваш АССР-ĕнчи совет тата парти органĕсем çĕрĕç органĕсем 1944 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пурнăçлайманнине, уйрăмăнах лашасемпе майракаллă шултăра выльăхсен шутне чакарнине палăртрĕç. Лашасен йышне анлăн ÿстересси чи паха задача пулса тăнине шута илсе, кĕсресене мĕнле пăхнине, вĕсене вăхăтра чуптарса хăварнине тимлĕн сăнаса тăрас ĕçе организацилеме хушрĕç.

Çак кăтартăва ăнăçлăн пурнăçлас шутпа, лашасене лайăх пăхнăшăн, чуптару кампанине ăнăçлăн иртернĕшĕн, тихасем илсе вĕсене пĕтĕмпех пăхса çитĕнтернĕшĕн конюхсене ĕçкунĕ тÿлемелли йĕркене тунă. Лайăх ĕçлекен конюхсене ĕçшĕн хушса тырă кăна мар, пăрусем, сысна çурисем, путексем те параççĕ. Халĕ ĕнтĕ конюхсен хавхаланса ĕçлеме пур условисем те çителĕклĕ. Конюхсемпе ездовойсен кашни кĕсререн пĕрер тиха илессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле.

Лашасем ĕрчетесси, вĕсен шутне ÿстересси пĕтĕмпех тихасене лайăх пăхса çитĕнтерничен килет. Анчах та çак пуринчен те паллă ĕçе чылай колхозсем кирлĕ пек пурнăçласа пымаççĕ-ха. Уйрăмăнах лашасем ĕрчетес енĕпе Шăмăршă, Хĕрлĕ Чутай, Первомайски, Кувакино, Пăрачкав районĕсенче ытла та çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Иртнĕ çул чуптару кампанине кирлĕ пек иртереймен пирки кăна кăçал пирĕн республикăри колхозсем 8.000 тиха илеймерĕç. Çак сиене эпир лаша ĕрчетес ĕç çине, чăн малтанах, чуптару кампанине иртересси çине кирлĕ пек пăхманнипе пула тÿсрĕмĕр. Пăрачкав, Канаш, Вăрмар районĕсенче кĕсресене чуптармалли плана та тултарайман, чуптарнă кĕсресенчен те 35 процентĕ кăна пĕтĕленнĕ. Пăрачкав районĕнчи «Передовик» колхозра чуптарнă 30 кĕсререн 6 кĕсре кăна пĕтĕленнĕ, çак районри «Свет» колхозра чуптарнă 10 кĕсререн пĕри те пĕтĕленмен. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Коминтерн» колхозра чуптарнă 43 кĕсререн 15 кĕсре кăна пĕтĕленнĕ.

Малта пыракан колхозсем лашасене чуптармалли кампание çураки кампанийĕпе пĕр пекех шутлаççĕ. Кашни чуптарнă кĕсре пĕтĕленнине тĕрĕслесех тăраççĕ. Сăмахран, Сĕнтĕр районĕнчи «Колос» колхоз (председателĕ Тямин юлташ) лаша ĕрчетмелли плана çулран çул тултарса пырать. Кăçал çак колхозра 31 пĕтĕ кĕсререн 23 тиха илнĕ. Тихасем пурте сывă, лайăх çитĕнеççĕ. Хăмланă кĕсресене кăçал та вăхăтра чуптарса хăварнă.

Çĕрпÿ районĕнчи «Новая жизнь» колхозра ăратлă лашасем ĕрчетмелли ферма организациленĕ. Çак колхозра ферма заведующийĕ Каришев юлташ кĕсресене лайăх пăхать, вăхăтра сăнаса тăрать, чуптарать. Ахальтен мар ĕнтĕ, кунта чуптарнă 23 кĕсререн 22-шĕ пĕтĕленнĕ, вĕсенчен 18 кĕсри хăмланă. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Верный путь» колхозра чуптару пункчĕн заведующийĕ пулса Авдеев юлташ ĕçлет. Вăл пĕр ăйăрпах 3 колхозри кĕсресене чуптарма ĕлкĕрет. Чуптарнă 40 кĕсререн 34-шĕ пĕтĕленнĕ. Авдеев юлташăн çитĕнĕвĕ акă мĕнрен килет. Вăл ăйăра яланах мăнтăр тытать, кашни кунах вăхăтра усăлтарса çÿрет. Кашни кунах ирхине тата каçхине лашасем пуханса тăракан вырăна сăнамалли ăйăрпа (пробникпа) каять, хăш кĕсре чупасшăннине пĕлнĕ хыççăн кăна ăратлă ăйăра ярать. Авдеев юлташа кĕсресене чуптарас ĕçе лайăх йĕркеленĕшĕн, ĕçкунĕсĕр пуçне, кашни пĕтĕленнĕ кĕсрешĕн 3-шер килограмм тĕштырă параççĕ. Иртнĕ çул ăна 102 килограмм тĕштырă хушса тÿленĕ.

Анчах та нумай колхозсенче чуптару кампанине йĕркеллĕ иртермеççĕ, тихасене кирлĕ пек пăхса çитĕнтермеççĕ. Кĕсресене пĕтĕлентерес ĕç çителĕксĕр пыни, чи малтанах, ăйăрсемпе кĕсресем ытла та ырханнинчен, кĕсресене вăхăтра чуптарманнинчен, чуптару ĕçне вăраха тăснинчен килет.

Ăйăрсене час-часах кÿлсе çÿресе вăрăм çулсене каяççĕ, вăхăтра кантармаççĕ, апат памаççĕ, шăвармаççĕ. Кĕсресемпе йывăр ĕçре усă кураççĕ тата тĕрĕс мар апатлантараççĕ, çавна пула хăм пăрахнисем нумай пулаççĕ.

Ишлей районĕнчи «Труд», «Красный пахарь» тата Калинин ячĕпе тăракан колхозсенче кĕсресене чуптарнă çĕрте усă куракан ăйăрсене ытти лашасем пекех кÿлсе çÿреççĕ. «Красный пахарь» колхоз председателĕ Лебедев ăратлă ăйăра кÿлсе виçĕ кун хушши кантармасăр ĕçсе çÿренĕ. Çапла вара «Быстролет» ятлă ăйăр пĕр вăхăтра кÿлсе çÿреме те юрăхсăр пулнă. Октябрьски районри Вырăс Улмалуй ялĕнчи «Красный борец» колхозăн старши конюхĕ Казаков ăратлă ăйăрпа Шупашкара килнĕ те, çул çинче хытă хăваласа ăйăра вĕлернĕ.

Сакăн пек тĕслĕхсенче чылай тĕл пулма пулать. Çапах та районсенчи хăшпĕр руководительсем тата судпа следстви органĕсенче ĕçлекенсем çак йĕркесĕрлĕхсемшĕн айăплисене ответ тыттарас тĕлĕшпе чăтма çук начар ĕçлеççĕ.

Иртнĕ çул чуптарнă кĕсресенчен республикăра 52,5 процентне кăна пĕтĕленнĕ, ыттисем вара хĕсĕр юлнă. Кăçал иртнĕ çул хĕсĕр юлнă кĕсресене чăн малтан чуптарса хăварма тăрăшмалла. Калас пулать, кĕсресене чуптарнипе кăна лăпланса лармалла мар, вĕсем пĕтĕленнипе пĕтĕленменнине тĕрĕслесех тăмалла; пĕтĕленмен пулсан, тепĕр хут чуптармалла. Кĕсре хăçан пĕтĕленнине çырса хумалла.

Кĕсресене чуптарас ĕç паянхи куна çителĕклĕ пырать теме пултараймастпăр-ха. Хăмлама пултаракан мĕнпур кĕсресен шутĕнчен 58,2 процентне кăна чуптарнă. Кăçал кĕсресене чуптарас ĕç уйрăмăнах Калинино, Вăрмар, Канаш, Шупашкар, Муркаш, Хĕрлĕ Чутай, Комсомольски, Элĕк тата ытти хăшпĕр районсенче çителĕксĕр пырать. Калинино районĕнче хăмлама пултаракан кĕсресенчен 25 процентне, Вăрмар районĕнче 29 процентне, Канаш районĕнче 34 процентне кăна чуптарнă. Уйрăм районсенче хĕсĕр юлнă ĕнесен шучĕ те пысăк. Кăçал, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, ĕнесене чуптарасси те çителĕксĕр пырать.

Районри çĕрĕç пайĕсен чуптару пункчĕ çумне колхозсен кĕрсисене çирĕплетмелле. Колхоз председателĕ кăна мар, кашни конюх, ездовой тата колхоз бригадирĕ вĕсен колхозĕн кĕрсисене хăш чуптару пункчĕ çумне çирĕплетнине лайăх пĕлсе тăмалла. Чуптару планне пурнăçлассишĕн колхоз председателĕ, колхозри лашасем ĕрчетес ĕçĕн заведующийĕ тата чуптару пунктĕн заведующийĕ ответлă пулса тăраççĕ.

Чылай колхозсенче çурхи ĕçсем вĕçленсе пыраççĕ, кĕсресене кантарма условисем ытларах пулаççĕ. Çак вăхăтпа усă курса, кашни хăмлама пултаракан кĕсрене чуптарса хăварассишĕн тăрăшмалла.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ 10 кĕсререн ытла тытакан колхозсенче лаша фермисем организацилеме хушаççĕ. Хăмлама пултаракан кĕсресене те уйхир бригадисенчен илсе, вĕсене фермăсене памалла.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ йышăннă тăрăх, апрелĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа конюхсене вĕсем пăхакан лашасен мăнтăрлăхне, тасалăхне тата сывлăхне кура ĕçкунĕ тÿлемелле. Çак постановление пурнăçлас тесе, çĕрĕç органĕсен, колхоз правленийĕсен лашасен сывлăхĕ тата мăнтăрлăхĕ мĕнлине кашни уйăхрах тĕрĕслесе хак памалла, вара çавăн тăрăх конюхсене ĕçкунĕ тÿлемелле.

Кăçал лашасем тата ытти выльăхсем ĕрчетес енĕпе пысăк çитĕнÿсем тума пур условисем те çителĕклĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри çитменлĕхсемшĕн пĕтĕмпех ферма работникĕсем ответлă пулса тăраççĕ. Хĕсĕр юлнă пĕр кĕсре, ĕне е ытти ама выльăх пулсан, çакă вăл фермăри работниксем çителĕксĕр ĕçлени çинчен калать. Кашни ама выльăх пĕтĕ пулмалла, кашни çамрăк выльăха лайăх пăхса çитĕнтерсе, колхоз кĕтÿне памалла.

И. ТРОИЦКИЙ.
Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн заместителĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНС ЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, издательство контори н — 0—23.

НТ 00124 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности СНК ... Заказ № 2. Тираж 13.000